# А.А.Плешаков «Пирĕн тавралăх».

1 класра ирттерекен урок.

Урок теми: Çулла хăçан пулать?


январь
феврал
ь
март
апрель
ма
й
июнь
июль
авгус
т
сентябр
ь
октябрь
ноябрь
декабрь
Х Ĕ Л Л
Е
ÇУРКУНН
Е
Ç У Л Л А
КĔРКУНН
Е

# Ку хăçан пулать?

Çĕр шуралчĕ мамăк пек юрпа,
Анлă Атăл витĕнчĕ пăрпа.
Йĕлтĕр йĕрĕ тăсăлчĕ инçе
Тăван ялăн анлă хирĕнче.


B.Kamil ©

# Хёллехи уйăхсем

- Декабрь
- Январь
- Февраль

# Ку хăçан пулать?

Шăтса тухрĕç тулă калчисем,
Сарăлаççĕ йывăç çулçисем.
Çĕмĕрт шурă чечеке ларать,-
Хăй енне пурне те астарать.



# Çурхи уйăхсем

- Март
- Апрель
- Май

# Ку хăçан пулать?

Çырласем пиçеççĕ пахчара,
Ешĕл çурхи тулă шăркара,
Савăн, савăн сарлака уй-хир
Кĕç килетпĕр тыр вырма эпир.


podkat.ru

# Çуллахи уйăхсем

- Июнь
- Июль
- Август

# Ку хăçан пулать?

Сарă тутăр çыхрĕ вĕрене,
Шкулалла чĕнсе ачасене,
Çăвĕпе шăп ларнă шăнкăрав
Турĕ шăнкăр-шăнкăр çĕн йыхрав



# Кёрхи уйӑхсем

- Сентябрь
- Октябрь
- Ноябрь

1. Январь
2. Февраль
3. Март
4. Апрель
5. Май
6. Июнь
7. Июль
8. Август
9. Сентябрь
10. Октябрь
11. Ноябрь
12. Декабрь

Çутăрах сăн кĕрет хĕвеле
Уйрăмах кăнтăрла тĕлнелле.
Раштавра хӳсе лартнă кĕртсем
Курпунланнă самай ирĕлсе.
Ура пуснă çĕрте юр путать,
Наччасра сăрхăнса шыв тулать.
Нумаях иртес çук вăхăтсем,
Ерипен симĕсленеĕç садсем.

Çĕнелсе  капăрланчĕ тĕнче,
Улăхра çĕр-пин тĕслĕ чечек.
Лĕпĕшсем вăй выляççĕ унта,
Лĕп çилпе чӳхенеççĕ каçчен.
Ах, тăхтар-ха тухмашкăн утта!

Кăра çил вĕрнĕрен çăка йывăç
Ĕнерхи сар тумне паян хывнă.
Раснарах кунран-кун сĕм вăрман,
Кĕренленнĕ тăм тивнĕ палан.
Уй-хирте сасси çук тăрнасен,
Нăйламаççĕ хуртсем,сăпсасем.
Ним пирки те çапах тунсăх çук
Евĕкреххĕн чĕрем тапнă чух.

Хĕл Мучи пăхмасть ирне-каçне,
Ĕлкĕресшĕн пур ача патне.
Лаши унăн чăн-чăн çил-çунат,
Ларса чупнă чухне çил тухать,
Евит çитнĕ, килчĕ вăл тинех.

# Маттур,  ачасем!

